25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943 МАЙ 28 ЭРНЕКУН 110(6347) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомземăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

92. Сĕнтĕр МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 13-мĕш тракторнăй бригади (бригадирĕ И. К. Андреев). Вăл планпа палăртнă 280 гектар вырăнне 328 гектар сухаланă, 170 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

93. Сĕнтĕр МТС ĕнчи хĕрарăмсен 3-мĕш тракторнăй бригади (бригадирĕ Ф. П. Питернев). Вăл планпа палăртнă 210 гектар вырăнне 227 гектар сухаланă, 72 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

94. Сĕнтĕр МТС-ĕнчи 5-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ О. А. Андреева). Вăл планпа палăртнă 280 гектар вырăнне 301 гектар сухаланă, 132 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

И. В. СТАЛИН юлташ Джозеф Э. Дэвис господина йышăнни

Майăн 26-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсен Президенчĕн Личнăй Представительне Джозеф Э. Дэвис господина йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

Унăн Величествине VI Георга, Великобритани корольне

Лондон

Гитлерла Германие хирĕç вăрçма пирĕн çĕршывсем хушшинче союзлă договор пунăрланпа пĕр çулталăк çитнĕ ятпа Сире, Сирĕн Величество, эпĕ хĕрўллĕн саламлатăп.

Англипе Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Тунисра Италипе Германи войскисене чаплăн çĕнтерни, вĕсем Италипе Германи войскисене аркатса тăкни, союзниксен вăйĕсем çав тери ўссе çиткине кăтартса парса, совет халăхĕн анлă сийĕсене питĕ саваннтарчĕ. Малашне пирĕн умра чылай йывăрлăхсем пулĕç, анчах та тăшмана сывлăш çапăрма памалла мар.

СССР-пе Великобритани хушшинчи договорпа çирĕплетнĕ союз тата Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсемпе тунă боевой пĕрлешу пирĕн тĕллев патне — тăшмана çĕнтересси патне тата вăрçă хыççăн пирĕн халăхсемпе ирĕклĕхе юрататакан ытти çĕршывсенчи халăхсем ыйтнă пек пĕрлешсе ĕçлесси патне илсе пырĕ тесе шанса тăратăп.

М. КАЛИНИН.

Антони Иден господина, Великобританин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрне

Лондон

Гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕринпе союзлă пуласси çинчен тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче договор пĕр çулталăк тултарнă кун Сире тата Британи Правительствине СССР Правительстви ячĕпе тата совет халăхĕ ячĕпе, çавăн пекех тата хамран та чĕререн саламлатăп. [illegible] Великобритани халăхĕ [illegible] пĕлтерме мар.

Халĕ, договор туниранпа пĕр çул иртнĕ хыççăн, вăл договор пирĕн халăхсем хушшинчи туслăха тата [illegible] пĕр-пĕринпе пĕрлешсе хĕрешнине [illegible] тума пулать.

Англи, Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн вăй-хăвачĕ ўснипе тăшман тўссе курчĕ ĕнтĕ. Гитлеровецсене пĕр-пĕрин хыççăн [illegible] çакна пĕлтерет, [illegible] тăшмана çĕнтересси [illegible] тата Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсем [illegible] Совет Союзĕ, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсем [illegible] çĕнтерсе [illegible] ĕçлесси çинчен [illegible].

В. МОЛОТОВ.

Унăн Превосходительствине В. М. Молотов господина, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне

Мускав

Англипе Совет Союзĕ хушшинче договор туни çул тултарнă ятпа Эсир, СССР Правительствине тата совет халăхне Унăн Величествин Пĕрлешуллĕ королевствин правительстви [illegible] Сталинград [illegible] Африкăра тăшмана [illegible] çĕнтерни [illegible] паянхи кун [illegible].

[illegible] çитес çулта [illegible] шанчăклă кĕтсе тăма пултаратпăр [illegible] Совет Союзĕ [illegible] тăшмана [illegible] тесе шанатăп.

АНТОНИ ИДЕН.

Совет Союзĕпе Англи хушшинче тунă союзлă договор çулталăк тултарнине палăртса Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов ирхи апат туни

Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пулассипе вăрçă хыççăн пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен Совет Союзĕпе Англи хушшинче договор çирĕплетнĕренпе çулталăк тултарнине палăртса, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ майăн 26-мĕшĕнче ирхи апат туса ирттернĕ. Апатра Великобританин Послĕ А. К. Керр господин, США Послоĕ В. Г. Стэндли господин, США Президенчĕн Личнăй Представителĕ Д. Э. Дэвис господин, генерал-майор Бернс господин тата çавăн пекех Британи Посольствин дипломатлă сотрудникĕсем, Британи Американ [illegible] Д. Э. Дэвис господинпа пĕрле килнĕ çынсем пулнă. Совет Союзĕ енчен апатра А. И. Микоян, А. Я. Вышинский, адмирал Н. Г. Кузнецов, генерал-полковник Ф. И. Голиков, В. Г. Деканозов, [illegible] А. Е. Корнейчук, М. М. Литвинов юлташсем тата Наркоматăн [illegible] ответлă сотрудникĕсем пулнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Майăн 25-мĕшĕнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

Хура тинĕсре пирĕн карап тăшманăн хăй тĕллĕн çўрекен баржине путарнă.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн самолет-торпедоносец нимĕçсен 10 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Майăн 24-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче боеприпассен 4 складне сирпĕнтернĕ, горючи складне çунтарса янă, артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, тăшманăн темиçе чугунçул эшелонне аркатнă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн разведка тăвакан группа тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та унăн артиллери батарейисем ăçта вырнаçса тăнине пĕлнĕ. Çак боевой задачăна пурнăçа кĕртнĕ чухне разведчиксем гитлеровецсен пĕр ушкăнне пĕтерсе тăкнă, унтан вĕсен хĕçпăшалĕсене пухса илсе хăйсен чăçне таврăннă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери 5 нимĕç самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Лисичанск районĕнче пĕр чăçăн артиллеристĕсем тăшман позицийĕсем çине темиçе тутчен сасартăк вăйлăн пере-пере илнĕ. Артиллери минометсен 7 батарейине тата 4 орудие пĕтерсе тăкнă, темиçе дзотпа блиндажа тата тăшманăн ытти укреплениййĕсене аркатнă. Пĕр соединенин снайперĕсем виçĕ кун хушшинче 208 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Севск районĕнче пĕр чăçăн разведка тăвакан отрячĕ нимĕçсен грузсем тиенĕ 30 лавне пĕтерсе тăкнă тата 80 гитлеровеца вĕлернĕ. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем тăшман войскисемпе техники пухăнса тăнă вырăнсене пенĕ. Сăнаса пĕлнĕ тăрăх, артиллерирен пенипе тăшманăн 20 автомашинине çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ, нимĕç пехотине пĕр батальон таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Финн заливĕнче тăшманăн 13 катерĕ пирĕн дозорта çўрекен 2 катера тапăннă. Совет морякĕсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсемпе çапăçса унăн 2 катерне путарнă, 2 катерне хытă сиенленĕ. Тăшманăн ытти катерĕсем вара васкаса финсен çыранри батарейисен хўтĕлĕхне тарнă. Пирĕн катерсем хăйсен базисене таврăннă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн чăçсем нимĕçсен 3 дзотĕпе 4 блиндажне ишĕлтерсе антарнă, пĕр паровозне сирпĕнтерсе янă тата артиллерин темиçе батарейине пусарса лартнă. Нимĕç отрячĕсем пирĕн часть мĕнле вырнаçса тăнине пĕлме хăтланнă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе гитлеровецсене каялла тартнă, вĕсем пирĕн позицисем умĕнче хăйсен 300 виллине пăрахса хăварса пĕр йĕркесĕр каялла чакнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен 4 çар эшелонне ўпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 6 кĕпере сирпĕнтернĕ, боеприпассемпе çар пурлăхĕн темиçе складне сирпĕнтерсе янă. Минск облаçĕнчи партизансен отрячĕ май уйăхĕнче нимĕçсен 4 çар эшелонне тата çул тўрлетекен пĕр поездне хытă сиенленĕ. 4 паровоз тата нимĕç оккупанчĕсен çар техникине турттарса пыракан темиçе вуншар вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Кубань таврашĕнче румынсен горнострелковăй дивизийĕн 21-мĕш ротинчен 3 салтак хăйсен ирĕкĕпе тыткăна парăннă. Тыткăна парăннă Голделну çапла каласа панă: «Кăнтăрла вырăссем пирĕн позицисене артиллерипе минометсенчен вăйлăн пеме тытăнчĕç. Çав вăхăтрах вырăс самолечĕсем пирĕн чăçсем çине бомбăсем нумай пăрахрĕç. Пирĕн рота йывăр çухатусем тўсрĕ. Рота командирĕ тарчĕ. Эпир те каялла çаврăнса чупрăмăр. Пĕр километра яхăн чупсан, хамăрăн рота командирне хăваласа çитрĕмĕр. Вăл пире халех каялла кайма хушрĕ, вăл çапла каларĕ: нимĕçсем каялла чакакансене пурне те персе вĕлерессĕ, терĕ. Нимĕçсем çапла тăвассине кĕтме те пулатчĕ. Эпир пĕр блиндаж шыраса тупрăмăр та унта кĕрсе пытантăмăр, унтан вырăссем патне пырса çитсессĕн вара тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Француз патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсемпе кĕрешессине вăйлатаççĕ. Парижра французсен пĕр ушкăнĕ Булонски вăрман патĕнчи нимĕç салтакĕсене вĕрентекен площадкăна сирпĕнтерсе янă, 60 гитлеровеца ытла вĕлернĕ е амантнă. Тулузăра железнодорожниксем темиçе вуншар вагонпа 2 паровоза юрăхсăра кăларнă. Орлеан районĕнче француз патриочĕсем нимĕç войскисем валли çар грузĕсем турттарса пыракан икĕ эшелона ўпĕнтерсе янă.

Майăн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Майăн 26-мĕшĕнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 5 батарейине пусарнă, десант антармалли баржăна путарнă, 2 транспорта тата 2 баржăна сиенленĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 2 противотанковăй орудине, 2 минометне пĕтерсе тăкнă, грузсем тиенĕ 7 автомашинипе лавне çĕмĕрнĕ. Кубанĕн анат пайĕнче тăшман пехотин икĕ батальон таран вăйĕсем пирĕн пĕр чăçăн позицийĕсене атакăланă. Пирĕн боецсем хаярран çапăçса тăшмана каялла хăваласа янă, ăна пысăк çухатусем тўстернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чăçсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 5 блиндажне ишĕлтерсе актарнă, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă. Пĕр участокра пирĕн пĕр чăçри разведчиксен отрячĕ тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та оборона ĕçĕсене туса тăракан гитлеровецсен ушкăнне атакăланă. Пирĕн боецсем 40 нимĕç салтакне вĕлернĕ, унтан темиçе çынна тыткăна илсе хăйсен чăçне таврăннă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехри темиçе участокра нимĕçсем çапăçса пырса разведка тума хăтланнă. Пирĕннисем пăшалсемпе пулеметсенчен тата артиллерирен персе, тăшмана хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Пирĕн артиллеристсем тăшманăн 2 дзотне, 9 блиндажне, 2 наб-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Пирĕн авиаци Рославль, Ельня, Спас-Деменск чугунçул узелĕсемпе станцийĕсене тапăнни

Майăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Рославль, Ельня, Спас-Деменск чугунçул узелĕсемпе станцийĕсене тапăннă. Пирĕн самолетсем чугунçул эшелонĕсем çине, боеприпассен склачĕсем çине, тăшманăн войскăсемпе техники пухăнса тăнă вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă.

Рославль чугунçул узелĕ çине бомбăсем уйрăмах нумай пăрахнă. Çул çинчи эшелонсем хушшинче тата тăшман склачĕсен районĕнче вăйлă пушарсем тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем, пĕр самолетсăр пуçне, пурте хăйсен базисене таврăннă.

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусем

Майăн 26-мĕшĕнче нимĕç авиацийĕ Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсемпе çар объекчĕсене массăллăн тапăнма хăтланнă. Пирĕн сывлăшри вăйсем çав тапăнусене питех те ăнăçлăн сирсе янă çеç мар, вĕсем тата тăшман авиацине пысăк поражени кўнĕ.

Кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 67 самолетне персе ўкернĕ. Пирĕн 20 самолет пĕтнĕ.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ чугунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Вĕсем Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне Улатăрти паровозсем юсакан заводрах хăварма (директорĕ Крупский, партбюро секретарĕ Шерстюк, завком председателĕ Демидов юлташсем) тата ăна иккĕмĕш премине пама йышăннă.

РСФСР-ти промысла кооперацийĕн мĕнпур работникĕсене чĕнсе калани

Юлташсем — РСФСР-ти промысла кооперации артелĕсен членĕсем, рабочийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсем тата служащийĕсем!

Пирĕн аслă çулпуç, Верховный Главнокомандующи, Совет Союзĕн Маршалĕ Иосиф Виссарионович Сталин майăн 1-мĕшĕнче кăларнă хăйĕн приказĕнче паттăр Хĕрлĕ Çарпа пирĕн тăван çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем умне пысăк задачăсем лартрĕ. Вăл нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç татăклăн кĕрешмешкĕн хатĕр пулма, тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕç валли мĕнпур вăйсемпе майсене мобилизацилеме, икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлеме, Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсем, боеприпассем, снаряжени тата апат-çимĕç ытларах парса тăма хушрĕ.

Сталин юлташăн сăмахĕсем кашни совет çыннин чĕрине кĕрсе вырнаçрĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн воинĕсемпе тылри ĕççыннисене кĕрешўпе ĕçре çĕнĕ паттăр ĕçсем тума, пирĕн юратнă тăван çĕршыва нимĕç оккупанчĕсенчен хăвăртрах ирĕке кăларассишĕн кĕрешме хавхалантарчĕç.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, промышленноçпа транспортăн тата ялхуçалăхĕн пур отраçлĕсенче те государство планĕсене срокчен тултарассишĕн, Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшассишĕн пыракан социализмлă ăмăрту çĕнĕ вăйпа сарăлса кайрĕ.

Мускаври промкооперации работникĕсем май умĕнхи социализмлă ăмăртура промышленность ĕçне лайăхлатрĕç. Апрель уйăхĕнче продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмпе 108,6 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана вара 119,4 процент тултарнă. Хулари 20 отраçлĕри промсоюзсем пурте апрель уйăхĕнчи плана тултарчĕç. Апрель уйăхĕнче ăнăçлăн ĕçленĕшĕн РСФСР Совнаркомĕпе ВЦСПС Мускаври промкооперацие пĕрремĕш преми пачĕç.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, Мускав хулинчи промкооперации работникĕсем иккĕмĕш квартал планне тата малтанхи çурçул планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва артельсенче анлăн сарса пыраççĕ.

Май умĕнхи социализмлă ăмăртура промкооперации артелĕсем хушшинче малта тухнă «Кожмехзавод» артель, Моссовет исполкомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕскер, металран тĕрлĕ япаласем тăвакан «Пресс» артель тата çĕвĕ çĕлекен «Прогресс» артель, пĕрремĕш преми илнĕскерсем, социализмлă ăмăртăва 1943 çулхи май тата июнь уйăхĕсенче те малалла тăсма йышăнса хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

1. 1943 çулти малтанхи çурçул планне срокчен тултармалла: «Пресс» артель тăрăх июнĕн 2-мĕшĕ тĕлне, «Прогресс» артель тăрăх июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне, «Кожмехзавод» артель тăрăх июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

2. Пĕрремĕш çурçулта планран ирттерсе 2.318 пин тенкĕлĕх продукци кăлармалла, вăл шутран «Прогресс» артелĕ тăрăх 981 пин тенкĕлĕх, «Кожмехзавод» тăрăх 775 пин тенкĕлĕх тата «Пресс» артель тăрăх 562 пин тенкĕлĕх кăлармалла. Пĕрремĕш çурçул планне номенклатурăра кăтартнă мур изделисем енĕпе те тултармалла.

3. Ĕç тухăçлăхне «Пресс» артель тăрăх май уйăхĕнче, апрель уйăхĕнчипе танлаштарсан, 3 процент, июнь уйăхĕнче, май уйăхĕнчипе танлаштарсан, 4 процент ўстермелле, «Прогресс» артелĕ тăрăх май уйăхĕнче 4 процент тата июнь уйăхĕнче 4 процент, «Кожмехзавод» тăрăх май уйăхĕнче 1 процент тата июнь уйăхĕнче 2 процент ўстермелле.

4. Продукцин хăйне ларакан хакне, иккĕмĕш квартал планĕнче кăтартнипе танлаштарсан, «Пресс» артельре 6,5 процент, «Кожмехзавод» тата «Прогресс» артельсенче 5 процент чухлĕ чакармалла.

5. Социализмлă ăмăртупа стахановла ĕçĕн меслечĕсемпе усă курса, пур рабочисем те ĕç нормине тултармалла тумалла.

6. Пĕр тикĕс, талăкри график тăрăх ĕçлесе пымалла, производствăри технологи дисциплинине çирĕппĕн пăхăнса тăмалла.

Мускав хулинчи промкооперации активĕн пухăвĕ малта пыракан «Кожмехзавод», «Пресс», «Прогресс» артельсен работникĕсем илнĕ социализмлă обязательствăсене ырлать тата РСФСР-ти промысла кооперации артелĕсен мĕнпур членĕсене, рабочийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсене, служащийĕсене çўлте асăннă артельсен примерĕпе социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сарса яма, кашни артель иккĕмĕш квартал планне тултармалла тăвассишĕн кĕрешме, çапла вара чылай артельсем çитерлĕксĕр · ĕçленине пула пĕрремĕш кварталта пулнă çитмемлĕхе витме чĕнет.

«Промканцприн», «Московский обувщик» артельсем, дерматинпа фурнитура пĕрлешĕвĕ, Свиблоски картон фабрики, «Красная прядильщица», «Московский шорник» тата «Промчертежник» артельсем плана тăтăшах тултарса пыраймаççĕ.

Юлса пыракан артельсен работникĕсем! Халĕ, Хĕрлĕ Çар воинĕсем фронтра гитлерла ирсĕрсене хирĕç вилĕмле кĕрешнĕ чухне, пĕтĕм совет халăхĕ ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ чухне, начар ĕçleме юрамасть.

РСФСР промкооперации артелĕсен çар продукцине куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç туса кăларассине ўстерме, халăха йăлара кирлĕ япаласене юсакан мастерскойсемпе предприятисен ĕçне татăклăнах лайăхлатма пысăк майсем пур.

Металран тĕрлĕ япаласем тăвакан артельсен работникĕсем! Фронт валли боеприпассем, халăх валли металран тунă куллен кирлĕ япаласем ытларах парса тăрăр. Вăрçăччен туса кăларнă япаласене тăвас ĕçе пĕтĕмпех тепĕр хут йĕркелесе ярăр, çăмăл оборудованисем, çĕвĕ çĕлемелли тата атă-пушмак çĕлемелли, пир-авăр тĕртмелли машинăсем валли запаслă пайсем туса кăларассине организацилĕр, металран тунă фурнитура, атă çĕлемелли тата слесарнăй инструментсем ытларах туса кăларăр. Хаклă метала перекетлĕн расходлассишĕн кĕрешĕр, производствăра металл отходĕсемпе ытларах усă курăр.

Тир-сăран артелĕсемпе атă-пушмак артелĕсен работникĕсем! Сирĕн продукци халăха питех те кирлĕ. Атă-пушмак ытларах туса кăларăр, унăн пахалăхне лайăхлатăр, сăранран тунă тăхăнмалли япаласем туса кăларакан предприятисемпе производствăсем организацилĕр, тир-сăран отходĕсемпе тата вĕсене улăштаракан япаласемпе усă курас ĕçре ытларах пуçарулăх кăтартăр.

Çĕвĕ çĕлекен, пир-авăр тата трикотаж артелĕсен работникĕсем! Çар валли тумтир туса кăлармалли плана пур енĕпе те тултарса пырăр, куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларăр, пир-авăрпа çипе перекетлĕн расходлăр, продукци пахалăхне лайăхлатăр, пир-авăрпа çип туса кăларма харпăрхăйĕн чĕр тавар базине туса пырăр, государство промышленноçĕн пир-авăр, трикотаж тата çĕвĕ çĕлекен фабрикисен отходĕсемпе пĕтĕмĕшпех усă курăр.

Апат-çимĕç туса кăларакан артельсенчи работниксем! Ялхуçалăх продукчĕсем туса илме лайăх хуçалăхсем организацилĕр, çуракине ăнăçлăн вĕçлĕр, ахнă çимĕçсене лайăх пăхса ўстерĕр, вĕсен пысăк тухăçлăхĕшĕн кĕрешĕр, вăрмансемпе хирсенче ўсекен çимĕçсемпе çырласене ытларах пухса хатĕрлĕр апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине ўстерсе пырăр.

Халăха йăлара кирлĕ япаласене юсакан мастерскойсемпе предприятисен работникĕсем! Республикăри пĕтĕм халăхăн кашни кунхи ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе сирĕн умма пысăк задачăсем лартнă. Атă-пушмак, тумтир, металран тунă япаласем, сĕтел-пукан тата килти ытти япаласене юсакан мастерскойсен ĕçне татăклăн лайăхлатăр. Заказсене чи кĕске сроксенче пурнăçа кĕртĕр тата ремонт пахалăхне лайăхлатăр. Тумтирсене химиллĕ майпа тасатакан предприятисем, прачечнăйсем, фотографисем тата парикмахерскисем пĕр чарăнусăр ĕçлессине организацилĕр.

Юлташсем — РСФСР-ти промкооперации артелĕсен членĕсем, рабочийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсем тата служащийĕсем! Хĕрлĕ Çар валли боеприпассемпе снаряжени туса кăларас ĕçре шултăра промышленноçа эпир чылай пысăк пулăшу паратпăр. Çавăнпа пĕрлех, пирĕн, вырăнти промышленноçпа тата инвалидсен кооперацийĕпе пĕрле республикăри халăх валли куллен кирлĕ таварсен тĕп массине туса парас пулать. Фронтпа тыл пире вăрçă продукцийĕ; куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларма, халăхăн йăлари ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе лайăхлатма хушаççĕ.

Фронтпа тылшăн икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлер, рабочисен сахалрах йышĕпех ытларах продукци туса кăларар! Тăшмана çĕмĕрсе тăкма, ăна пирĕн тăван çĕршывран хăваласа кăларма хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн юратнă çулпуç, Верховный Главнокомандующи, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

Чĕнсе калание Мускав хулинчи промысла кооперации активĕн пухăвĕнче 1943 çулхи майăн 24-мĕшĕнче сўтсе явса йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

людательнăй пунктне, тĕслĕ грузсем тиенĕ 5 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсен пĕр батальонне çитти çапаласа янă.

* * *

Лисичанск районĕнче нимĕçсен отрячĕ тĕтĕм хыçĕнче пытанса Çурçĕр Донецăн сулахай енне каçма хăтланнă. Пирĕннисем нимĕçсем çине хаяр пеме пуçăнсан, вĕсем васкаса каялла чакнă. Нумай гитлеровец шыва путнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче 3 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Кунсăр пуçне, пĕр самолета пирĕн зенитлă артиллери персе сиенленĕ, вăл хăй пирĕн территори çине ÿкнĕ.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен 2 çар эшелонне ÿлĕнтерсе янă. Салтаксем ларса пыракан 7 вагон тата хĕçпăшал тиенĕ 10 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Тепĕр кунне çав отрядри партизансен ушкăнĕ пысăк чугунçул станцине пырса кĕнĕ те 2 подъемнăй крана сирпĕнтерсе янă. Могилев облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ май уйăхĕнче чугунçул çинчи 3 кĕпере тата шоссе çулĕ çинчи 25 кĕпере сирпĕнтерсе янă. Нимĕç хуралĕпе çапăçса, партизансем 70 гитлеровеца вĕлернĕ, 8 пулемет, 41 винтовка тата 10 пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи пĕр участокра эсэсовецсен полици дивизийĕнчи пропаганда взвочĕн унтер-офицерне Эмиль Якобсона тыткăна илнĕ. Эмиль Якобсон çапла каласа панă: «1943-мĕш çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа апрель уйăхĕччен эпĕ Зеегеймра (Эльзас) тата Берлинра эсэсовецсен специальнăй шкулĕсенче вĕрентĕм. Берлинри шкул Берлин çумĕнчи Целендорфра вырнаçнă. Унта икĕ ушкăнччĕ. Пĕр ушкăнра радиотехниксем, дикторсем, фотокорреспондентсем тăратчĕç. Тепĕр ушкăнра провокаци тума, сÿеçтерме ăсталанса çитнĕ мошенниксем тăратчĕç. Шкул пуçĕнче эсэсовецсен «Дас шварце Кор» ятлă хаçачĕн редакторĕ Гюнтеф д'Алькэн тăрать. Унăн штабĕнче помощниксемпе цензорсен вырăнĕнче сутăнчăк журналистсен ушкăнĕ, кирек мĕнле ирсĕр ĕç те тума хатĕрленекенсем ĕçлеççĕ. Унта тĕрлĕ халапсемпе элексем шухăшласа калаççĕ, провокациллĕ тата суя пĕлтерÿсем хатĕрлеççĕ. Май уйăхĕн пуçламĕшĕнче мана Хĕвелтухăçĕнчи фронта ĕç эрнелĕх практикăна ячĕç. Фронтра эпĕ темиçе кун çеç пурăнтăм, часах тыткăна лекрĕм».

* * *

Ленинград облаçĕнчи Славковски районра гитлеровецсем калама çук тискер ĕçсем тăваççĕ. Нумаях пулмасть нимĕç отрячĕ Озбрино ялне пырса кĕнĕ. Фашистла ирсĕрсем пур çынсене те прикладсемпе, штыксемпе хĕратса, килĕсенчен хăваласа кăларнă та вĕсен мĕнпур пурлăхне, апат-çимĕçне пуртса илнĕ, ялта вара çунтарса янă. Славковски районри халăха нимĕçсем чăтма çук пысăк налогсемпе асаплантараççĕ. Персе пăрахассинчен хăраса, кашни хресчĕнĕн кашни гектар çĕр пуçне 40 пăт тыра, 35 пăт утăпа улăм памалла. Кунсăр пуçне укçалла налогсем хунă: ĕçлеме пултаракан кашни çын пуçне 100 тенкĕ, йытă пуçне 15 тенкĕ, кушак пуçне 10 тенкĕ тÿлеттереççĕ. Пурăнмалли пĕр хатĕрсĕр тăрса юлнă хресченсем выçăпа аптăраса вилеççĕ.

Республика уйхирĕсенче

Çум çумлама тытăнчĕç

КАНАШ, майăн 27-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Районри пур колхозсенче те çум çумлама тытăнчĕç. Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз нумаях пулмасть кок-сагыз плантацине çум курăкĕсенчен тасатрĕ. Ретсен хушшийĕсене кăпкалатса тухрĕ. Çавăн пекех Турри Юнтапари «Канаш», Мокрицы М. Горький ячĕпе тăракан колхозсем те кок-сагыз плантацийĕсене çум курăкĕсенчен тасатса кăпкалатса тухрĕç.

Чылай колхозсем ирхи çĕртме тăваççĕ. Çак ĕçе çуракиччен кĕрешнĕ пур лашасене те кÿлме тăрăшаççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Ирхи çĕртме туса пĕтертĕмĕр

ЕЛЧĔК, майăн 27-мĕшĕ. Ирхи çĕртмене иртерех туса хăвармалли çĕрĕн пирĕлĕхне ытларах упраса хăварма пулать. Çакна эпир кăçал шута илтĕмĕр. Çурхи тырăсене акса пĕтернĕ хыççăнах пур колхозсем те ирхи çĕртме тума тытăнчĕç. Сухаланине сÿреленсех пытăмăр. Тăпра лайăх кăпкаланса юлчĕ.

Майăн 25-мĕшĕ тĕлне «Новый путь» колхоз ирхи çĕртмене 135 гектар, «Знамя» колхоз 60 гектар сухаларĕç. Çапла ку колхозсем майăн 25-мĕшĕнче ирхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕç. Кĕрхи тырăсем акмалли участоксене азан хатĕрлерĕç.

П. ЩЕРБАКОВ,
Тăрмăш ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Çулйĕр строительствин уйăхлăхне кăтартуллăн иртерер

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 1-мĕшĕччен çулйĕр строительствин уйăхлăхне ирттересси çинчен постановлени йышăнчĕç.

Постановленире уйăхлăха оперативно ертсе пыма ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсен ответлă пулассине кăтартса панă. Вĕсен районри ĕççыннисене çак ĕçе мобилизацилемелле, хăйсен районĕн строительство планне пурнăçлас ĕçе татса памалла.

Пирĕн çулйĕрсем тăвас тĕлĕшпе опытсем пур. Халĕ вĕсемпе анлăн усă курни, колхозниксен хастарлăхне пуçарса ертсе пыни, ку ĕç пирки ытларах тăрăшни кирлĕ.

Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен кашни ялсоветĕпе колхоза ĕçлемелли уйрăм участоксем уйăрса памалла, вĕсем мĕнле ĕçлесе пынине тĕрĕслесе тăмалла. Ĕçе нимĕнле чăрмав та ан пултăр тесен, кашни ĕçлекенĕннех кирлĕ инструментсем (носилка, кĕреçе, пуртă т. ыт. те) пулмалла.

Строительство вăхăтĕнче инструментсем юсаса тăма уйрăм бригадăсем организацилемелле. Ĕçлеме пыракансене пурăнмалли туса памалла: выртса тăмалли тата апат-çимĕçсене упрамалли вырăнсем пулмалла. Апат пĕçермелли, шыв вĕретмелли вырăнсене малтанах палăртса хумалла. Строительство ĕçĕ пуçланиччен бригадăсемпе звеносем уйăрса, вĕсене хăйсен умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа памалла.

Кунпа пĕрлех, пур пек механизмсемпе анлăн усă курни кирлĕ. Кашни колхозăн, бригадăн çирĕп график пулмалла, графика кашни кун, кашни бригадăпа участок тăрăх пурнăçа кĕртсе пымалла.

Ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пыма строительствăра ĕçлекен коммунистсемпе комсомолецсене уйăрса хумалла. Строительство участокĕсенче рабочисене медицина пулăшăвĕ парассине организацилемелле.

Строительство планне срокчен пысăк пахалăхпа пурнăçлакан района Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ.

Иртнĕ çулти уроксенчен тивĕçлĕ выводсем туса, ĕçе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, çулйĕр строительствин уйăхлăхне кăтартуллăн иртерер.

Чăваш ĕççыннисем туяннă „За родину" бронепоезда фронтовиксене пани

Н. ХУЛИ, майăн 25-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Кунта Чăваш республикинчи ĕççыннисем туяннă «За родину» ятлă çĕнĕ бронепоезда фронтовиксене панă ятпа митинг пулчĕ.

Унта хула ĕççыннийĕсем, предприятисенчи паллă стахановецсем тата çар чаçĕсен представителĕсем пухăннă. Трибуна çинче — завод директорĕ, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ, Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ Белолипецкий юлташ, бронепоезд командирĕ капитан Шевченко, заводри паллă стахановецсем т. ыт. те.

Митинга хула совет исполкомĕн председателĕ уçать. Завод директорĕ саламлă сăмах калать.

— Чăваш республикинчи ĕççыннисем хăйсем пухнă укçа-тенкĕпе «За родину» ятлă бронепоезд тума заказ пачĕç. Çав задачăна хăвăртрах пурнăçлас тесе, — тет вăл, — пирĕн завод коллективĕ ырми-канми ĕçлерĕ. Халĕ бронепоезд хатĕр. Вăл кĕçех ылханлă тăшман çине ыткăнĕ, тăшман çине хаяр вут-хĕм тăкма пуçлĕ.

Завод директорĕ бронепоезда йышăнма килнĕ экипажа çапăçусенче паттăр та çирĕп пулма сунать.

Бронепоезд командирĕ — Сталинград патĕнчи историллĕ çапăçусен участникĕ капитан Шевченко чĕркуçленсе ларса тав тăвать те бронепоезда йышăнма пуçлать. Вăл хальхи çĕнĕ техникăпа тунă, çĕнĕ йышши орудисемпе хĕçпăшаллантарнă бронепоезда пăхса çаврăнать. Унтан хула ĕççыннийĕсем умĕнче, Чăваш республикин представителĕсем умĕнче çакăн пек тупа тăвать:

— Хаклă юлташсем, — тет капитан Шевченко, — эпĕ сире хамăрăн чаçăн командованийĕ умĕнче тата пĕтĕм тăван çĕршыв умĕнче çапла шантарса калатăп: эпир Чăваш республикинчи ĕççыннисен укçипе тунă «За родину» бронепоезд çинче нимĕç захватчикĕсене Сталинград патĕнчи хĕрÿ çапăçусенче аркатнă пекех хаяррăн аркатса пырăпăр. Сирĕн шанчăка чыслăн пурнăçа кĕртĕпĕр».

Тăван çĕршывшăн çапăçакансен ретĕнче

Паян чăвашсен паллă поэчĕ Иван Ивник вăхăтсăр вилнĕренпе çулталăк çитрĕ.

Чун-кăмăл хăвачĕ Ивник чĕринче чакмиех вăйлăччĕ, вăл çăлкуçĕ пек тасаччĕ, уçăччĕ. Çав хăватах ăна вăйсăрланнă аллине карандаш тыттарнă, «Ылхан» ятлă поэмăн пуçламăшне çыртарнă.

Поэт шухăшĕ тăрăх поэма пысăк пулмалла пулнă; çав поэмăра Совет халăхĕ этемлĕх тăшманне — фашизма хирĕç паттăррăн çапăçнине, фашизма аркатса тăкнине, каллех мирлĕ те телейлĕ пурнăç килнине кăтартса памалла пулнă. Поэт поэмăн пуçламăшне çеç çырса ĕлкĕрчĕ.

Эпир çав япалана вуласа тухрăмăр та унри сăвăçă ыталарĕ, эпир поэт хăйĕн творчествинче пысăк çитĕнÿ тунишĕн хĕпĕртерĕмĕр. Ивник хăйĕн «Ылханĕнче» халăх шухăш-кăмăлне, унăн ĕмĕтне, унăн хăватне калама çук вăйлăн кăтартса панă, пĕтĕм сăввине, ун ритмине, рифмисене классикла ăсталăхпа тытса пынă, халăх сăмахлăхĕнчи пуянлăхпа пĕлсе усă курнă. Çавăнпа та чăваш халăх ывăлĕн — Ивникăн «Ылханĕ» халăх ылханĕ пулса тăрать. Ирсĕр вăрхурахсене — фашистсене Ивник чи хаяр, чи вĕри ылхан чĕлхипе ылханать; çав ылхан кашни йĕрке, кашни строфа хыççăн ÿснĕçемĕн ÿссе пырать.

Ылхан сана, хура ылхан,
Тилĕпеле сысна йăхне:
Чее те еĕмсĕр майпалан
Эс кĕтĕп пирĕн çĕр çине.

Ылхан сана, виç хут ылхан,
Çĕлен-калта йăхне-тĕпне:
Пĕр систермесĕр йăвунтан
Эс тăсрăн вилĕм сăннине.

Ылхан сана, çич хут ылхан,
Тĕнче хура вăрхурахне:
Ăмсаннă имĕш тахçантан
Эс пирĕн халăх пурлăхне

Ылхан сана, çĕр хут ылхан,
Ал тăснăшăн хĕвел çине:
Хăртасшăн пулнă мĕн, шуйттан,
Эс пирĕн халăх телейне.

Ылхан сана, пин хут ылхан
Аркатнăшăн хуласене:
Çак çут тĕнче ниçта, нихçан
Сана ан илтĕр ытамне.

Ивникăн ылханĕ çак йĕркесемпе вĕçленет:

Сĕр çĕклейми ылхан сана,
Пур ĕмĕр-ĕмĕр тĕрлешĕле!
Аçа кикен те тăпруна
Шăтса ан пăлăрттăр санне!

Халăх ывăлĕ çеç, халăх шухăш-кăмăлне, унăн ĕмĕтне, унăн хуйхи-суйхине пĕлсе тăракан çын çеç çакăн пек вăйлă сăвă çырма пултарнă. Иван Ивник чăннипех те Тăван халăх ывăлĕ пулнă, вăл çырнă произведенисем чăваш халăхĕн культурăллă пуянлăхне кĕреççĕ.

Ивникăн вăрçă çинчен çырнă япалисене, оборона темипе çырнă сăввисене халăх патне çитерес тесе Чăвашсен Государство Издательстви кăçал уйрăм кĕнеке туса кăларать.

Çапла поэтăн сăвви-юррисем тăван халăха çĕнтерÿ шухăш-кăмăлĕпе хĕçпăшаллантарнă çĕрте хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнаççĕ. Поэт хăйĕн ĕçĕпе тăван çĕршывшăн çапăçакан воинсен ретĕнче пырать.

Ст. ШАВЛЫ,
А. ЭСХЕЛЬ

ТАСС опровержениййĕ

Америкăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешÿллĕ Штатсенче Америкăн Европăри ĕçсене хутшăнмалла мар текен хăшпĕр çынсем çакăн пек хыпар сараççĕ: совет территорийĕнчи пĕр метереологи станцийĕ Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар вăйĕсене хирĕç кĕрешме Японин çар вăйĕсене пулăшса тăрать иккен.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çак тахçанах тăрă шыв çине кăларнă суя сăмах вăл унăн авторĕсем хăйсен пуçĕнчен туртса кăларнă шухăш пулса тăрать, вăл пĕрттe тĕрĕс мар, ăна уççăнах курăнса тăракан тенденциллĕ шухăшпа сараççĕ.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: майăн 25-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Эгей тинĕсĕнче тăшманăн сутуилÿ суднисене атакăланă.

Майăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн вăтам бомбардировщикĕсем Мессинăна (Сицилия) тапăннă. Бомбăсем тавар станцийĕ çине, çавăн пекех тата чугунçул сурчĕсем çине, нефть цистернисем çине ÿкнĕ.

Майăн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем кăнтăр Италири Катандзаро çывăхĕнче чугунçул составне атакăланă. Англи бомбардировщикĕсем тата Лампедуза утравне тапăннă.

Ĕнер Америка авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсем Сан-Жованни (Италия) çине пырса бомбăсем пăрахнă. Чугунçул станцийĕпе тавар станцийĕ бомбăсем çине тÿрремĕнех ÿкнине палăртнă. Редже-ди-Калабриари порта тапăннине пула нефть турттаракан суднăна вут хыпса илнĕ. Темиçе бомба чугунçул вокзалĕ çине ÿкнĕ.

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: ĕнер союзниксен Çурçĕр-Хĕвеланăç Африкăри аэродромсем çинче вырнаçса тăракан самолечĕсем тăшманăн Сардинири порчĕсемпе аэродромĕсене пыра-пыра çапнă. «Вĕçекен кропость» йышши самолетсем Ла-Маддалена тата Терранова-Паузани çине бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсем çав вăхăтра портра тăнă суднăсем çине, порт сооруженийĕсемпе боеприпассен склачĕсем çине ÿкнĕ. Пушарсем тухнă, взрывсем пулнă. Союзниксен авиацийĕ Адьгерори тата Элбири аэродромсене тапăннă. Союзниксен самолечĕсем кунĕ каçах тăшманăн Сардинири ытти объекчĕсене нумай хутчен тапăннă.

Çавăн пекех тата тăшманăн Пантеллери утравĕ çинчи объекчĕсем çине те бомбăсем пыра-пыра пăрахнă.

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, майăн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи çине Англин 600 яхăн бомбардировщикĕ вĕççе пынă. Пуринчен те вăйлăрах Дюссельдорфа атакăланă. Хăйсен базисене 27 бомбардировщик таврăнман.

Дюссельдорф çине мĕн чухлĕ бомба пăрахнине Дортмунда тапăннипе танлаштарма пулать тесе шутлаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Колумбия» ятлă радио саракан компани пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ тапăннине пула Дортмунд хулинче çаллан та 37.000 çын пурăнмалли пÿртсуртсăр тăрса юлнă.

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче майăн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер те союзниксен авиацийĕ Сицилие, Сардинине тата Пантеллерие массăллăн тапăннă. Çав операцисене Англин тата Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем хутшăннă. Сардинире доксемпе сутуилÿ карапĕсене пысăк сиен кÿнĕ. Сицилире Мессина хулинчи электростанци çине, порт районĕ çине тата тавар станцийĕ çине бомбăсем тÿрремĕнех пырса ÿкнине палăртнă. Ликатăра бомбăсем доксемпе ангарсен районĕнче çурăла-çурăла кайнă; Порто-Эмфедоклере бомбăсем хими завочĕсен районĕнче, портра тăракан суднăсем хушшинче тата электростанци çинче çурăла-çурăла кайнă.

Çавăн пекех тата Пантеллери утравĕ çинче те чылай пысăк сиенсемех пулнă.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 23 самолетне персе ÿкернĕ.

Англин инçене вĕçекен истребителĕсем Грецин хĕвеланăç çыранĕсенчи Превезăна вĕçсе пырса гидросамолетсен базине атакăланă. Тăшманăн нумай самолечĕсене сиенленĕ тата нефтехранилищĕне вут тивертнĕ.

СИЦИЛИПЕ САРДИНИ УТРАВĔСЕМ ÇИНЧИ ТАТА КАЛИБРИРИ ХАЛĂХА МАССĂЛЛĂН ЭВАКУАЦИЛЕНИ

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрихран çапла пĕлтерет: кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Рим районне тата Италин çурçĕрти районĕсене Сицилипе Сардини утравĕсем çинчен тата Калибрирен куçса тухнă халăх темĕн чухлĕ пырса тăрать. Каланă тăрăх, çав эвакуацие нимĕçсен çар влаçĕсем панă приказ тăрăх тăваççĕ. Çав влаçсем вĕсем Италин кăнтăрти çĕрĕсенче тĕрлĕ ĕçсем тума питĕ пысăк право илнĕ.

ДЕ ГОЛЛЬ АЛЖИРА КАЯССИ ÇИНЧЕН ФРАНЦУЗСЕН НАЦИ КОМИТЕЧĔ МĔНЛЕ ШУХĂШЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: майăн 24-мĕшĕнче де Голль генерал ертсе пынипе Французсен наци комитечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Наци комитечĕ Кĕрешекен Францин Çурçĕр Африкăри мисси руководителĕн Катру генералăн отчетне итленĕ. Çакă уççăнах палăрнă: малалли ĕçсем пирки наци комитечĕн тĕп шухăшĕсемпе Жиро генералăн политики хушшинче пысăк уйрăмлăхсемех çук; курăннă тăрăх, Алжирта нейтральнăй власть тума та текех чăрмавсем çук пек. Наци комитечĕн пĕлтерĕвĕнче малалла çапла каланă: Катру халех Алжира таврăнмалла, вăл Жиро генерал патне туслă ответ илсе каймалла. Наци комитечĕ шутланă тăрăх, де Голль Алжира çак эрнерех тухса каймалла.

ИСПАНИН ЭЛЬ-ФЕРРОЛЬ ПОРТĔНЧИ МОРЯКĔСЕН ВОССТАНИЙĔ

ЛОНДОН; майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Санди экспресс» ятлă хаçат çапла пĕлтерет: Испанин Лондонри ĕçлĕ çыннисем Испанин Эль-Ферролӗри тинĕс-çар базинче çар морякĕсен восстанийĕ пулни çинчен калакан хыпарсем илнĕ. Португалие тарса çитнĕ Испани морякĕсем çапла каласа пĕлтереççĕ: çак кунсенче Эль-Ферроль порчĕн çыранра тăракан батарейисем тата восстани пуçласа янă моряксем ярса илнĕ хăшпĕр çар карапĕсем пĕр-пĕрин çине тупăсемпе пенĕ. Пĕлтерÿ тăрăх, Эль-Ферролӗре тăракан моряксем тарăхни май уйăхĕн пуçламăшĕнчех палăра пуçланă. Вăл Франко генерал флота сасартăк тинĕсе тухма панă приказ пирки пуçланса кайнă. Приказра флот тинĕсе тупăсемпе перес ĕçе практикăра вĕренме тухать тенĕ пулнă, çав хушăрах моряксен пысăк пайне Балеар утравĕсем çине кайма хушнă. Карапсен командирĕсем çав приказа вĕсене тĕнĕл держависен çарĕсене Тунисран эвакуацилеме яраççĕ тесе ăнланнă та Франко приказне пăхăнман. Хăшпĕр командăсем офицерсене хĕçпăшалсăрлатса карапсене хăйсен аллине ярса илнĕ. Çав карапсене çыранра тăракан батарейăсем пенĕ, хăшне-пĕрне тинĕсе шыва путарнă. Ытти карапсем çыранран перекен батарейăсем çине хирĕç пеме пуçланă. Вĕсен снарячĕсем портри тинĕс-çар арсеналĕ çине ÿкнĕ пуль тесе шутлаççĕ, унта вара пушар тухнă.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИ ÇЫРАНĔСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Англин çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи çыранĕсене тапăннă. Суту-илÿ предприятийĕсемпе уйрăм çынсен çурт-йĕрĕсене сиен кÿнĕ. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Пĕлтерÿ

Майăн 28-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн парткабинечĕнче (Чувашски урам, 6) агитаторсем валли «Фашистсен лагерĕнчи кризис» ятлă темăпа лекци пулать.

Лекцие ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ Давтян юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн партакабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Майăн 30-мĕшĕпе 31-мĕшĕнче Ишлей районĕнчи Ишекре икĕ кунлăх ярмарка пулать. Суту тăвакан организацисене, промартельсене, колхозсене, колхозниксене çав ярмаркăна промышленность таварĕсемпе, пурне те кирлĕ таварсемпе, ялхуçалăх продукчĕсемпе пыма чĕнеççĕ.

Ярмарка комиссийĕ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ çумĕнче июнĕн 1-мĕшĕнче унта вĕренме кĕме хатĕрлекен курс уçăлать. Вăл курсра институтăн преподавателĕсем вĕрентеççĕ. Вĕреннĕшĕн укçа илмеççĕ. Вĕренекенсене общежитие вырнаçтараççĕ тата апатлантараççĕ. Заявленисене çак адреспа ямалла: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 34, ялхуçалăх институчĕ. Заявленипе пĕрле автобиографи тата мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан документ ямалла.

„Росглаввинон" Шупашкарти эрех комбинатне районсенче сад çимĕçсем тата çырла пуçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсемпе агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Коммунальнăй слобода, 21-мĕш çурт. Телефон 1—73 (пĕр звонок).

Кашни колхозник вырьăх-чĕрлĕхлĕ пултăр

Иртнĕ çулта Шĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз государствăна аш-какай памалли плана вăхăтра пурнăçа кĕртсе, çавăн çулах 1943 çулшăн государствăна авансра 15 центнер аш-какай панă. Государствăна çавăн пек пысăк пулăшу парса тăрас ĕçе «Шĕнер колхозĕ выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе продуктивноçне ÿстерессишĕн çине тăрса кĕрешнипе пурнăçа кĕртме пултарнă.

Колхоз 1943 çулта государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарчĕ. Тата кашни колхозникех хăйĕн килĕнче ялхуçалăх артелĕн уставĕпе пăхнă чухлĕ выльăх-чĕрлĕх тытса усрама лайăх условисем туса пачĕ.

Çулсерен вăйлă тырпул туса илни колхозниксен пурнăçне малалла лайăхлатса пыма май парать. Колхозниксем апат-çимĕçе колхозпа хăйсен выльăх-чĕрлĕхĕ валли çеç мар, государствăпа фронта парса пулăшмалăх та туса хатĕрлеççĕ.

Кузьма Фирсов — колхозри паллă стахановец. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче вăл колхозра активлăн ĕçлесе 729 ĕçкунĕ тунă. Ĕçкунĕсем çине нумай тырă, утă-улăм илнĕ. Фирсов юлташ хăйĕн хуçалăхĕнче ĕне, пăру, сурăхсем, кăвакалсем тата чăх-чĕп йышлă усрать. Унăн пурте çителĕклĕ. Хăйшĕн те, государствăна пама та сĕт-çу, аш-какай тăвать вăл. Унăн икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче, вĕсем тăван çĕршывĕн шанчăклăн çапăçаççĕ, колхозниксен ырă пурнăçне тăшманран сыхлаççĕ.

Е тата Фекла Федоровăна илер. Унăн упăшки фронтра, гитлерла çынсиенсене хирĕç çапăçать. Килĕнче унăн 4 ача, вĕсем ĕçлеме пултараймаççĕ-ха. Анчах Фекла Федорова колхозра тăрăшса ĕçлесе вăрçă вăхăтĕнчех хăйĕн хуçалăхне чылай малалла ячĕ. Çапла ĕçлесе вăл хăйне пурăнмалăх çеç мар, хуçалăхне малалла аталантармалăх та тупăш илет. Вăл пĕччен ĕçлесех килĕнче ĕне, сысна, сурăхсем тытать.

Илларион Слонов фронта кайса хăйĕн хуçалăхне вата амăшĕ çине шанса хăварнă. Ун чухне Слонов юлташăн хуçалăхĕнче 3 сурăх çеç пулнă. Вата колхозница Дарья Слонова юлташ колхозра куллен активлăн ĕçлесе, иртнĕ çулта 130 ĕçкунĕ тума пултарчĕ, килти пахчара пахча-çимĕçсем нумай туса илсе кăçал ĕне туянчĕ, сурăхсем йышĕ пиллĕке çитрĕ, чăх-чĕпсем те халь унăн пĕлтĕрхинчен ытларах.

Çавнашкалах Алексей Порфирьевăн хуçалăхĕ те хутшăнсах пырать. Унăн та икĕ ывăлĕ фронтра çапăçаççĕ. Иртнĕ çулта колхозра ĕçлесе вăл 822 ĕçкунĕ тунă. Тивĕçлипех вăл пуян пурăнать. Хуçалăхра унăн ĕне те, сурăхсем те, кăвакалсем те пур. Тăрăшса ĕçлекен колхозниксен пархатарлă вăйĕ колхоза та çулран çул тĕреклетсе пырать.

Колхоз иртнĕ çулта агротехника мероприятисене тĕплĕн пурнăçласа пынипе пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Тыра государствăна памалăх та, кирлĕ фондсене çителĕклĕ таран хывса хăвармалăх та тата колхозниксене çителĕклĕ чухлĕ памалăх та пулчĕ. Ĕçкунĕ çине икĕ килограмм тĕш тырă, 500 грамм çĕрулми, 400 грамм купăста, 4 килограмм улăм тата пĕр тенкĕ укçа тухрĕ. Колхозниксем сахал мар сĕт, купăста, çăмарта, çĕрулми пасара тухса сутнă, тупăш тунă.

Анчах Шĕнер ялĕнче пур колхозниксем те вăй хурса тимлĕн ĕçлеççĕ тесен тĕрĕс пулмасть. Вĕсем лайăх ĕçлекен кÿршĕн пурлăхĕ çине тинкерме ытларах пăхаççĕ, вăл пурлăх пирки тепĕр чухне кĕвĕçеççĕ те, анчах хăйсен хуçалăхне ÿстерме кахалланаççĕ. Çавăн пек колхозниксем хăйсен килĕнче выльăх-чĕрлĕх тытма мар, хăйсене пурăнмалăх та ĕçлеме ÿркенеççĕ.

Акă, Спиридон Макаров вăйпитти çын. Çемьинче унăн 4 çын. Вĕсенчен иккĕшĕ ÿссе çитсе пыраççĕ, колхозра ĕçлеме аванах пултармалла. Анчах çак çемье ĕçлеме ÿркенет. Хăй Макаров иртнĕ çулта 0,5 ĕçкунĕ çеç тунă, арăмĕ — Васса Макарова пĕр ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Нимĕн тĕлĕнмелли те çук, Спиридон Макаровăн килĕнче пĕр выльăх та çук.

Прасковья Фадеева çинчен колхозниксем тăрăхлакалаха калаççĕ, мĕншĕн тесен вăл вăйпитти çын, ĕçлес тесен вара колхоза ура та ярса пусмасть. Ывăлĕ те ĕнтĕ кăччă шутне кĕнĕ, 17 çулта, анчах вăл та ĕçлемест. Мĕнпур вăхăта ытларах пасарсем тăрăх çÿресе ирттереççĕ вĕсем. Хуçалăхра пĕр выльăх та çук, мĕншĕн тесен иртнĕ çулта Прасковья Фадеева ĕçкунĕсен минимумне тултарман, ывăлĕ те 36 ĕçкунĕ çеç ĕçлесе илнĕ. Паллах ĕнтĕ, çапла кахалланса ларсан, хуçалăхра ĕне-сурăх пулма пултараймасть.

Колхозра инкек-синкеке пула ĕнесĕр тăрса юлнă колхозниксем те пур. Çавăн пек колхозниксене, вĕсем колхоз производствинче тăрăшса ĕçленине кура, колхоз пăрусем парса пулăшать. Ольга Матвеева, Марфа Шуколева колхозницăсене пăрусем панă. Фронтовиксен çемьисене те чылайĕшне выльăх-чĕрлĕхсем парса пулăшнă.

Вăрçă пынă вăхăтра кашни колхозник йывăрлăхсем çине пăхмасăр, çине тăрса ĕçлени кирлĕ. Пурнăç условине лайăхлатассишĕн, фронта активлăн пулăшса тăрса çĕнтерÿ кунне çывхартассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшмалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйту халь колхоз правленийĕсем умĕнче те, кашни колхозник умĕнче те чи малти вырăнта пулмалла. Кашни колхозник выльăх-чĕрлĕхлĕ пулмалла.

С. ШАДИН.
Калинино. (Хамăр корр.).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, партм пурнăç пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 346 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. 6. 53. 12 п.